**Юрă**

Асăнмалăх, тусăм, эсӗ
Парса яр мана парне:
Табак енчӗк, тӗрлемесӗр,
Тата Пушкин сăввине.

Ак кăçал чӗнет мана та
Хам юратнă Хӗрлӗ Çар.
Эсӗ хăв тулли сăнна та
Мана, тусăм, парса яр.

Ан хурлан, ан тăк куççулӗ,
Ан шурат хавас сăнна:
Хаваспа, тен, лайăх пулӗ
Çӗмӗрмешкӗн тăшмана.

Уйрăлу, теç, пысăк хурлăх, -
Маншăн мар ку кӗвӗсем.
Ну, çапах та пырса кур эс
Ăнсăртран асна илсен.

Тен, тăшман, хăй урнă анчăк,
Вӗлермешкӗн пултарать.
Эс ун чух пырса савсамччӗ
Мана сивӗ çамкаран.

Çăтмасассăн çавă вилӗм,
Тивмесен тăшман пульли, -
Паттăртан пӗри - эп килӗп,

Сана курăп куç тулли.

*Думилин, А. Юрă / А. Думилин // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 291-292.*